


Ака уйăхĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарти “МТВ-центр” суту-илӳпе кану центрĕнче “Воспитани. Вĕренӳ. Карьера” специализациленĕ VII курав уçăлчĕ.

Йăлана кĕнĕ курава пĕлтĕр 75 учреждени хутшăннă пулсан кăçал 86 учреждени экспозицисем хатĕрленĕ. Çав шутра — 12 аслă шкул, 12 колледжпа техникум, 16 профучилище, 16 шкул, 16 ача сачĕ, 6 хушма пĕлӳ учрежденийĕ, 3 интернатпа коррекци шкулĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан кăçал ял шкулĕсемпе садиксем хăйсен ĕç-хĕлĕпе анлăрах паллаштарма тăрăшни курăнать. Экспозицисем тĕрлĕ енлĕ, пуян, паянхи пурнăç ыйтăвĕ--сене туллин тивĕçтереççĕ.

Курава савăнăçлă лару-тăрура уçнă май Чăваш Ен вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕ В.Н.Иванов паянхи пĕлӳ тĕнчи çав тери анлă пулнине, экспозицисем вăл кашни тытăмра мĕнле аталанса пынипе уçăмлăн паллаштарнине палăртрĕ. «Эверест» компанисен ушкăнĕн генеральнăй директорĕн çумĕ С.М.Щукина «МТВ-центрта» черетлĕ курава вырнаçтарма кăçал тата пысăкрах, меллĕрех лаптăксем уйăрса пама май килнине асăнчĕ, ăнăçу сунчĕ. Уйрăм калаçура уява хутшăннă темиçе çын шухăшне те ыйтса пĕлтĕм.

В.В.Андреев, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Шупашкарти коопераци институчĕн ректорĕ:

- Паян мана ача сачĕсен экспозицийĕсем питĕ тĕлĕнтерчĕç. Унта ĕçлекенсем ачасене воспитани парса шкула хатĕрлес тĕллевпе паха меслетсене пурнăça кĕртме,

çĕнĕлĕхсене алла илме тăрăшаççĕ. Мана, депутата, çак тытăмра ĕç укçи пĕчĕк пулни пăшăрхантарать. Садик воспитателĕсем ăслă-тăнлă, сывă ăру çитĕнтерес ĕçе пĕлтерĕшлĕ тӳпе хывнине шута илсе вĕсене тивĕçлипе хаклама май паракан йышăнусем тума вăхăт. Тата манăн коопераци институчĕ «Воспитани. Вĕренӳ. Карьера» курава кашни çулах хутшăннине, кăçалхи, çиччĕмĕш, курав ытти çулхисенчен чылай пуянрах пулнине палăртас килет.

В.Д.Васильев, Шупашкарти механика-технологи техникумĕн директорĕ:

- Паянхи уявра тĕрлĕ шайри вĕренӳ заведенийĕсем Чăваш Республики валли мĕнле специалистсем хатĕрленине, аталану çул-йĕрне анлăн кăтартса параççĕ. Эпир те çак курава çулленех хутшăнатпăр. Шкул ачисем, професси училищисенче вĕренекенсем, ашшĕ-амăшĕ экспозицисемпе паллашса килĕшекен специальноç суйласа илме пултараççĕ. Республика правительстви, Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерстви паха кадрсем вĕрентсе кăларас ыйтупа тимлĕ ĕçленине çĕнĕ курав тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ.

В.Н.Леонтьева, Çĕрпӳ районĕнчи Апакасси тĕп шкулĕн учителĕ:

- Шкулта технологи вĕрентетĕп, «Ылтăн йĕп» кружок ертсе пыратăп. «Воспитани. Вĕренӳ. Карьера» курава пуçласа килтĕмĕр. Çапах та пирĕн экспозиципе, ачасем хăйсен аллипе çĕленĕ тата тĕрленĕ чăваш кĕписемпе кăсăклансах паллашакан чылай. Кружок ĕç-------ĕ-семпе республика, Раççей шайĕнчи конкурссенче пĕрре кăна мар малтисен йышне кĕме пултартăмăр. Паянхи курава хутшăнма май килнĕшĕн уйрăмах кăмăллă пултăмăр.

Виçĕ кунлăх курав программи питĕ анлă. «Чăваш Республикинчи вĕренӳ учрежденийĕ--сенчи вĕренекенсемпе студентсен хăй тĕллĕ-нлĕх органĕсене аталантармалли стратеги», «Професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсен федерацин патшалăх çĕнĕ вĕренӳ стандарчĕсемпе ĕçлеме куçассин уйрăмлăхĕсем», «Ĕçе вырнаçнă чухнехи тĕп йывăрлăхсем» ыйтусемпе «çавра сĕтелсем», çамрăксен «МолГород-2011» вĕренӳ форумĕн презентацийĕ иртрĕç. Шупашкар хулин ĕçпе тивĕçтерекен центрĕ вакансисен ярмăрккине йĕркеленĕ. Кăмăл тăвакансем ĕç вырăнĕсен компьютер базипе паллашма, професси туртăмне палăртакан тест витĕр тухма пултарчĕç. Куравра «Промтрактор», «АБС Электро», «Электром», «Шупашкарти агрегат завочĕ», «Яхтинг», «Рассвет», «Техмашхолдинг» организацисем, «Чайка» санатори-сывлăх комплексĕ тата

ыттисем вакансисем сĕннĕ, ятарлă экспозицисем йĕркеленĕ. Программăна республикăри вĕренӳ учрежденийĕсен пултарулăх коллективĕсем концертпа илемлетрĕç.

**Алина ЛУКИЯНОВА.**

**Хыпар.**